# Капкан




— Мĕн ҍула ларҍĕ ку кĕпер?
— 84 тенке.
— Ма хаклă?
— Щутла: йăвăçĕшĕн, тата платниксене 45 тенкĕ тӳленĕ, йалкорсем кĕпере тутарасшăн ретаксине 20 çыру йанă--10 шар пусран (маркка) 2 тенкĕ пулат. Ретакси вĕсене конорар 12 тенкĕ тӳленĕ, саметкисене хаçат çине çапса кăларма 26 тенкĕ тукнă. Пĕтĕмпе 84 тенкă пулат.

# Пăшал пытармалла выљакансем.

Вăрçă ţарăннăрапа çитмĕл те çиţĕ конферентси те туса иртерне пулĕ йут патшалăхсенţи министăрсем.

— Калаçма вĕреннĕ, ţĕлхе кĕçĕтет вĕсен. Кăрţавкă йерне ţĕлхисене.

Нумай пулмасť Шеневă йатлă хулара... пĕлетĕр пулĕ пысăк кĕпĕрнерен пĕţĕкрех, ţĕрне хуринţен пысăкрах патшалăх пур тĕнţере—Швейтсари. Çав патшалăхăн Шеневă йатлă илемлĕ хулара, вăрçă хатĕрĕсене пĕтересси çинţен калаçма, йут патшалăх претставиттĕлĕсем кăçал та мункун умĕн çĕнĕрен пуханса ларţĕç.

Çанталăк лайăх унта: вăрман, сат, шыв, кутна шывса выљамалли сăртсем... пĕр сăмахпа каласан пуртте пур.

— Мĕншĕн пĕрле пуханса ţуна йăпатас мар.—Швейтсарире Киттайри пек, йе Авканистанри пек краштăн вăрçи çукха. Питех хăраса ӳкмелле мар—Киттайпа Авканистан пит инçе.

Нумайăн пуханнă унта. Анклирен, Франтсирен, Итталирен, Амерĕкрен, Иапионирен, тата ытти патшалăхсенţен ţĕрĕк кутлă тумтирсем, çĕнĕ пиншаксем, ţĕриклетекен пушмаксем, витре пек шлепкесем, шур перţеткесем пуханнă.

Совет Сойусĕ никампа та вăрçасшăн марри, куринпе те килĕшӳллĕ пурăнма тăрăшни куçа хупсах та курăнсах тăрať. Пĕлтĕр Литвинăв йулташ ун çинţен йатарласах уйрăм хут çырса паţĕ, конференсире те уççăн каласа кăтартрĕ.

— Усăсăр калаçнинţен нимĕн те тухас çук, вăрçă хатĕрне пĕтермелле, вăрçăсем халăха пысăк сийен кӳреççĕ. Ывăрлăк ĕçлекен клас ĕнси çине тийенет, пĕтерес вăрçа, терĕ вăл унта.

Анţах пирĕн телекатсем темţул тăрăшсан та, ытти патшалăх телекаţĕсем пĕр вырăнтан хăпайман. Пĕри теприн çине йарать, тепри виççĕмĕшне айăплаť.

— Ыттисем пăрахмасан, ман йепле трукках пăрахас. Çук, хаţ пулмасť. Тепре пуханăпăр. Çанталăкĕ, кунта аван... терĕç пĕлтĕр.

Кăçал тепре пуханţĕç. Иепле те пулин вăрçă хатĕрне пĕтерес тесе, Совет Сойусĕ кăçал та вăл комиççине уйрăм телекатси йаţĕ.

Çав, „вăрçă хатĕрне пĕтерес тĕлĕшпе тунă“ комиççи йепле ĕçлени çинţен çырса пĕлтерме, кореспотентсем нумайăн кайнă.

Ытти патшалăхсенţен, конешнă, пуркорсем (пуршуаслă кореспотентсем). Пирĕн патшалăхран ăстарах ĕçкорсем. Пиртен ыйтмасăрах кореспотентсемпе пĕрлешсе „Капкăн“ кореспотенţĕ те вĕçтернĕ.

— Кайса курамха, мĕн хăтланаççĕ, терĕ пулас.

Хаţ ĕнтĕ „мĕн курнипе мĕн илтнине çырса пĕлтерет. Иглĕр: нумай вăхăт „ĕçлерĕ“ комиççи, анţах пĕр утăм та малалла кайман. Пирĕн телекатси пуçлăхĕ Литвинăв йулташ калама тытăнсан (калаçма вăл пит виţкĕн калаçať, тĕрĕслĕхпе çаптарať) Лоутон текенскер (комиççи претçетаттĕлĕ), кутне йеп кĕнĕ пек, ниçта кĕрейместь, пĕр хĕрелет, пĕр шуралať, тутисене „мăк-мăк“ тутаркалаť, пулăшу ыйтса ыттисем çине салхуллă пăхса илет.

— Пулăшăр мана тархасшăн—теççĕ унăн куçĕсем.

Каккуй пулăшма унта: Кешентен (Анклиретставиттĕлĕ), иртнĕ çеççире те ăна Литвинăв йулташ йеплĕ çăмах хыттарнине асра тытса, çăварне те шыв, те ерех сыпнă та, нимĕн те ţĕнмест.

— Пырса çыхланха унпала, мăкăртатať вăл сăмси айĕнţе.—Пĕлтĕр те çĕр тĕпне анса кайаттăм.

Кипсон (Амерĕк претставиттĕлĕ) тухса калас пеккине калакаларĕ: «Çĕр çинţи çарпа, вăрçă хатĕрĕсене ţакарассине хирĕç нимĕн те каламастăп та, анţах шыври йапаласем çинţен урăх ţухне калаçмалла пулať, мĕншĕн тесен... Паранкăпа пемелли пăшалсене пĕтерме йурať, терĕ.

Кермапипе Китай, тата Туртси претставиттĕлĕсем пирĕн телекатси майлăрах калаççĕ. Лоутон ним тума аптăраса, саççетанине хупať. «Ку ыйтусем çинţен, ыран калаçатпăр» тет вăл.

Апрелĕн 22 мĕшĕнţе Кешентен сăмах илет.

— Мĕн калĕ ĕнтĕ ку, мĕскĕн, тесе пăкаççĕ ун çине. Кешентен кăвăн пек кукша пуçне ылттăн çĕрĕллĕ аллипе сăтăркалať те, сăмах калама тытăнать:

— Тухса калаçма епĕ хатĕрленменţĕ. Кипсон калана пирки çеç калатăп. Кипсон сăмахĕ ман кăмăла кайрĕ. Шыв айĕнţе çӳрекен кимĕсене пĕтерме пулať, аţасене турпасран кимĕсем тума ţарма пулať, епĕ те унпа килĕшетĕп, ыттисем çинţен ӳлĕмрен калăп, тет вăл çамки çинţи тарне шăлса.

Литвинăв йулташ сăмах илсе вĕсем çуйеçĕ ţăпти çапнине кăтартať. Лоутон ниçта кĕрейместь. Аптăраса сасăламасăр Совет пройектне пăрахăçа кăларať, Литвинăв йулташа сăмах парасшăн мар тăрăшať. Пĕр сăмахпа каласан, претçетаттĕл пулнăшăн хăйне хăй вăрçať.

— Намăс мар-ши? Мĕнţул çын пуханнă. Епĕр улталанине пĕтĕм тĕнţе пĕлет ĕнтĕ.

Çапах та хăй, çынсем ан систĕр тесе, кулкалať, куçне хĕскелет, Литвинăв йулташа айăплама тăрăшať.

Çапла ţылайţţен «вăрçă хатĕрне пĕтерес тĕлĕшпе пухнă комиççи» пĕр вырăнта

# Кам килӗшет ҫак ресолҍутсипе?



— Ресолҍутсине ҫыртӑм. Ак итлӗр: „Пиртен ерех ӹӑрши кӑрсен, пиртен кӗнӗ тесе шутламалла мар, йут ҫынсенђен кӗнӗ тесе шутламалла“...

тапӑртатса тӑђӗ. Тӑван халӑха ҫавӑн ҫинђен ҫырса пӗлтерес терӗм—ҫыраť пирӗн корреспотент. Скуђнӑ куна, Шупашкара таврӑнас килет. Таврӑнсан тӗпӗ-йӗрӗпех каласа парӑп. Сывӑ пулӑр тепре куриђђен,—тесе туртса хунӑ йулашкинђен.

Пустуйах кайнӑ унта пирӗн корресротент. Каймалла марђђӗ. Ара вӗсем, пуршуйсем, ваттисем калашле: ҫитмӗл те ҫиђӗ хирти ҫитмӗл те ҫиђӗ шурӑ ђула хӑҫан та хӑҫан кайӑк сӑхса шыҫтараť, ҫавӑн ђухне тин, вӑрҫӑ хатӗрӗсене пӗтересси ҫинђен постановлени йышӑнма шухӑшлаҫҫӗ.

Есӗр йышӑнмасан епӗр пӗтӗм тӗнђери ӗҫлекенсемпе хресђенсем пухӑнса, вӑл постановленийе йышӑнӑпӑр та, сире Шеневӑ ҫывӑхӗнђи тусем ҫинђен кутпа шӑвтарса тинӗсе антарса йарӑпӑр. Иурати, Шеневӑри шлепкесем?..

## Васкавлӑ пулӑшу.

— Ей! калӑрха, тухтӑр?
— Кам?
— Тухтӑр.
— Мӗн тӑван тухтӑрпа?
— Так сӑмах вурђђӗ те унпа...
— Мӗпле сӑмах, кала?
— Вӑт ак ҫапла:
Мӑшкӑл-касси йалканашӗ
(Шуйтан мари ҫӗр ҫӑтатшӗ)
Пулӑшкомӑн укҫипе
Ӗҫке йавӑ ҫӗрӗпе,
Халӗ ҫиђӗ ҫын шӑпах
Хӗн кураҫҫӗ мухмӑрпа.
Ҫиђӗ ҫын выртаҫҫӗ ђирлӗ,
Сыватмашкӑн тухтӑр кирлӗ.
— Апла пулсан—тухтӑр мар
Ђасрах милитси йарар!..

Йехвин К.

# Премĕк.

(„Капкăн“ ăмăртуне),

— Йăл... йăл-йăл... вулса илчĕ №.. хулинче техникăмра вĕренекен Лаханкка писсатĕл февралти „Сунтал“ хуплашкин тăнĕр йĕнне вуласа тухсан.

Лаханкка йаланах пуштă йештĕкĕнче упăтленнĕ, тата пĕлтĕр „Капаша“ икĕ саметкă кĕртнĕ анчах пулин те,—паллă писсаттĕл шутланнă. Писсаттĕлсен списĕнче те пулнă...

Паллах, литтературă ăмăртăвĕ ҫинчен пĕрре вуланипех унăн кăвар-чĕри лăпланкан. Вăл ăна иккĕ, виҫҫĕ вуласа тухнă. Тăватăмĕш хут вуласан...

— Ăмăрту! Ăмăрту!., Ойторох!.. Тĕнче илемсĕрех те мар!..—тесе ҫухăрса йачĕ те, хăйĕн тусĕ—Калаттай поет патне сиккипе уткăнчĕ.

Лаханкка пынă чух—виҫ ерне тăрантарнă сысналла Кăпшек Калаттай йĕмпĕҫҫисенчен касса илсе, ӳтне ҫил кĕресрен питĕрет мĕн.

— Сапласăн?—терĕ Лаханкка, йулашки неттаксемпе илнĕ „Сафо“на тивертсе.

— Саплатăп, саплатăп, мăн саплăк хуратăп... терĕ тусĕ рифмăласах.—Венйтиҫатси ытлашшипех пуҫланчĕ-ха... А ес мĕн пуйан пек „Сафо“-семех ĕметĕн? Кӳрхе пĕрине... а ах, тутлăҫке!

— Акă мĕншĕн, кур... терĕ Лаханкка.

— Ак, вула... Ăмăрту! Пĕрремĕш преми—500 тенкĕ, иккĕмĕш иккĕ—400 тенкĕ, виҫҫĕмĕш—300, тăваттăмĕш—200 тенкĕ... Сисетне, чорт, мĕн шăрши кĕрет? Чапа тухмалли..., хе-хе... пуймалли...

Йăкалт! сикрĕ Калаттай пукан ҫинчен. Пуҫе маччана шант! турĕ.

— Урр-ра!.. Урр-ра, Лаххан! К чорту йĕм саплассине! К тйавăлу! Ытă хӳрине вултăр!

Хăрăк, шатра сăмсаллă Лаханккана пăчăртаса тытса икĕ хут ҫавăрса ҫапрĕ те, сĕтел ҫине йатса лартрĕ.

— Чăт, чорт... Ан макăрнă пултăр... Хĕпĕртеннипе йуратса хĕнетĕп сана...—терĕ чăх чăрилле Лаханкка.—Тайха тепре вулар вăг ăмăрту ҫинчен...

Иккĕшĕ те сĕтел хушшине ыталанса ларчĕҫ.

— Так... Темăсем пит нумай ыйтусене ҫавăрса илме пултараҫҫĕ... Пĕрремĕш преми—500 тенкĕ, иккĕмĕш—400 тенкĕ, виҫҫĕмĕш—300, тăваттăмĕш—200...

— Ну, акку 100 тенкĕллĕ премишĕн вулама та не стойăт... Срок—1-мĕш нойапĕр...

— Хей, унччен 20 роман та ҫырма пулаĭ!—терĕ Лаханкка, пĕҫҫине хыҫса. Мĕнле пек Ваҫă?

— Еп пĕр 15 поемă ҫыратăпах ĕнтĕ!.. терĕ Калаттай. Чылай шутласа хурсаччĕха.. Чăн малтан еп ҫыратăп „Хĕреслĕ йал“, хамăр йал хушшисене ҫурхи шывсем ҫуллених хĕреслесе ҫыранлантарни и йалсоветчĕ ăна йусамманни ҫинчен... Унтан ҫыратăп „Ыттăн сехет“—Тимак Ваҫкине сехет вăрринче тытса хĕвени ҫинчен... Унтан—„Ҫуҫĕм“, „Асамат“... Ну, лайăхрах йатсем тупăнсан йешшо та пуҫу писсаĭ. Ҫав мана лайăх йатсем тупăнмани хуплаĭ... Атту ен темĕн чухлĕ ҫырмалла...

— Еп ак мĕн шутласа хурса,—терĕ Лаханкка. „О, уйăх!“, „Урнă ĕне“, „Кăвак пĕлĕт“... Тахҫанах шутласа хунă... Вопшĕм, нойапĕрччен пĕр 15—20 штук картлаттараратăп...

— Нта-а... Пĕрремĕш преми—400, иккĕмĕш—300... Преми, преми... Питĕ тутлă премĕксем ҫав!..

* * *

Ҫурҫĕр иртни ик сехет. Лаханкка хваттерĕнче шăп. Иунашар пӳлĕмрен ҫеҫ хуҫа карчăкĕн сăмси Ҫĕрпӳ пасарĕнчи шăхличле шăхăраĭ:

— Вши-и... Ши-и... Шит...

— А, чорт сăмсине... сӳс тăпкипе питĕрсе лартма мĕн, кайавни... йатлаҫса илчĕ Лаханкка. Шухăшлама та канлĕх ҫук!

— Так... Пĕрремĕш преми—500 тенкĕ... 500 тенкĕпе епĕ Чулхулана кайса тумланатăп, сначчăт... Пачтто, шлепке, калстăк... Сăн ӳкертгеретĕп... Сăнне „Сунтал“ хуплашки ҫине ҫапаҫҫĕ копешнă. Таккой, пысăккăн... Клара Чоткĕнăн сăнне ҫапнă пек... Сăнне ҫаптарнă чух, питкуҫа ҫĕрĕсни тăвас... Писсаттĕлсем йаланах ҫапла...

Ҫур сехетрен Лаханкка пулас рай ҫинчен шутласа выртнипех тĕлĕрсе кайрĕ...

...Лаханкка хваттерĕ умĕнче пин-пин халăх. Мусăк Лаханккана, 1-мĕш преми илнĕскерне, чысласа ахăраĭ. Червоатсă тăракан калстăка ҫыхкаласан, халăх патне крыльцса ҫине Лаханкка хăй тухрĕ. Крыльцта мар, пĕлĕт ҫӳллĕш ҫуртăн палкконе. Пĕсамантра Лаханккана чăваш криттĕкĕсем сырăнчĕҫ. Картгусĕсене хывнă. Миттĕнк. Хаваслăх миттĕнкĕ. Ыттăн Аркати виҫ ҫухăрăм тăршшĕ реч калаĭ... Кĕҫвĕҫ—криттĕксем ҫухăрма тытăнчĕҫ.

— Лаханкка—ҫамрăк ăмăрт кайăк!!! Хавăл ҫамрăк-ха, тата виҫ ҫултан мĕн курăпăр?!—ҫухăраĭ Иалавин. Хыт кăшкăрни кӳҫлăхĕ тарласа карĕ.

— Итеолокийĕ, итеолокийĕ мĕнешкел!-тет Патман.

— Хуйхă шăрши те ҫук!—ҫухăраĭ Ылттăн Микули.

— Урр-ра!..

Криттĕксене чавсасемпе сиркелесе, Л

хавкка патне тĕркĕлтипе писсаттĕлсем тухрĕç. Шуҫă пек вăрăм Рсай пурнҫен малтан кукленсе аллине паҫĕ. Хăй кăмăлсăр пек çавах... Шакла пуçне хыçат. Хумма Çеменĕ, хăйĕвҫен иртсе кайакавсем пулвăшăв, айаккалла пăрăнса, лаҫ! сурҫĕ. Ун хыççăн Иаван-Муҫи хашлатса çитрĕ. Çăпата вырăнне пўрократсене тытмалли капкăнсем сырнă.

Охо-хо-хо!—какăлтатса илҫĕ вăл, капкăнсем хирсе уçса мосоллепсе кайнă аллилисемпе Лаханккана лăпкаса.—Ес, тусăм, саттир-йумăра та ан манха... Ес çырма пуçласан—..Капкăн" ҫасах 50.000 не ситĕҫҫĕ...

— Йурĕ, Иаван-Муҫайĕм, çырăп, çырап...

Çав вăхăтрах:

— Апҫу! Апҫхи!—ҫихлатрĕ труқ хваттер карҫăкĕ.

— Варт! тăрса ларҫĕ Лаханкка, вăранса. Тĕттĕм. Шăп. Ним те ăнланма çук. Хўререн кутăн çакнă каҫака пек куçĕсене ҫарса пăрахса, Лаханкка кĕтесселле пăхрĕ...

...Темскер шурăскер хускавнă пек туйăнҫĕ. Татах, татах... Ав, ҫервонтсăсем кĕтесрен тухса Лаханкка патнелле шăваççĕ... Çутă пуçлă, шултра ҫĕрнеллĕ... Çăварĕсене караççĕ... Çамкисем çине шатах „1-мĕш премн" тесе çырнă. Шăваççĕ, шăваççĕ... Ав, пĕрри, пысăкраххи (пĕр 10 ҫервонтсăлăххи пулас çав) вырăн патнех ҫупса пыҫĕ, шăлĕсене шартлаттарат...

— Ай-ай! Çăлăр! Премн! Аиăрту, патрет, премн! çухăрса йаҫĕ те Лаханкка, ҫервонтсăсенҫен пулнă йатăсем ураран çыртасран, çтева çиннелле мĕн пур вăйпа ҫаваланма пуçларĕ...

— Премн! Çăлăр, Аиăрту-у!.

* * *

Тул сутăлнă ҫух тешурни хвершăл пўлĕмне çўç-пуçа тухатмăш пек аркатса йанă хĕрарăм ҫупса кĕҫĕ.

— Тавариш хвершăл!.. Айтакка тархасшăн...

— Мĕн, мĕн?

— Ман патра пурнакан çамрăк аҫа... Калаттайав Иаванĕ... мĕн, çав хăйамата кайасси...

— Мĕн, тетĕн!—пўрократла кăшкăрҫĕ хвершăл.

— Тем пулҫĕ... Çурçĕрҫен çырҫĕ-çырҫĕ те, сасартăк: премĕк, премĕк, тесе кутран йĕппе ҫикнĕ пек сикме тапратрĕ ара... Премĕк те премĕк, тет... Ухмаха йерчĕ!.. Аҭа-ха!..

...Хвершăлпа арăм Калаттай хваттерне çитес ҫух, пралукран Лаханкка хваттерĕн хуçи сиксе тухрĕ. Пăрçапа персе хăрагнă мулкаҫ пек ҫĕтрет хăй...

— А-а, хвершăл... хвершăл... Манăн ват хваттиранг ухмаха йереххăл... Лаххан^ав Васли... Çĕрле... Аҭа-ха, хаҫ сяй: „Патрет, ҫервонтсă, премĕк..." тет... Çыхса пăрахрăмăр уш... Вилет пуҫ..

— Сирĕн те „премĕк" тетни?—тĕлĕнсе карĕ Калаттай хваттер карҫăкĕ,

— Премĕк, тет çав... Сирĕн те... мĕн?

— Пирĕнни: пĕр премĕкĕ 500 тенкĕ, тет...

— Апла пулсан—пĕр ҫирех...

— Апла пулсан—пĕр ҫирех...—Ҫупас ҫасрах!.

---

Ухмаха йернисен çургĕнҫе виçшер уйăх пурăнса килсен, Лахавккапа Калаттай текех премĕк таврашĕ асăнман вара. Çыхсем асăнсассăн та—кăсем хăснă кăна. Романсемпе поемăсем те çырман. Алкĕпрă формăлĕсем кăна курăнкаланă вара тĕлĕкре те.

Аван пурăваççĕ тет вĕсем... Ыгла аванах та мар та, çавах аптрамалла мар.

Йĕне ҫĕрни пуснă тата, мĕн!

Леон. Линҫ.

## Кирек хăçан та хатĕр.



Куç кĕçтет. Ырра мар. Тахăшĕ те пулсан хам çирен хаçата çырса парасшăн пулмалла. Опровершени йарас.

◆◆◆

## Пуху хыççăн.

— Иванов йулташ, есĕ мана питĕ курaймастăн иккен?

— Мĕншĕн апла калатăн?

— Ара иртнĕ пухура есĕ ман çинҫен мĕн каланине итлесех лартăмçке.

— Епĕ есĕ пуррине пĕлмен те. С—с.

# Пиђет тишкерӗвӗнђе тута калаҫни.

*(Хаҫата ҫыракансемпе вулакансен конференции тсинђе тухса калани).*

...Тухрӗ пренире халӑх умне хулӑм туталлӑ Краснокомиссарӑвски йулташ.

— Йулташсем! Епӗр сотсиалисӑм тунӑ ҫӗрте пиђетӗн хӑватлӑ ӗҫӗсем те пӑларђӗҫ.

Анђах палӑрђӗҫ те, пӗтӗмпех палӑраймарӗҫ.

Пиђетӗн иртнӗ ернери номӗрӗнђе малтанхи стравитсӑрах ман ҫинђен статйа пулса тухнӑ. Вӑл статйара „Хӗрлӗ йун“ йулташ „Краснокомиссарӑвски йулташ мункун прағнӗкне авалхи мешђенсемле реликни йӑлипе пупсемпе ҫыхланса иртерђӗ“, тесе ҫырнӑ вӑл. Тата мажалла—ӗлӗкхи пуп ывӑлӗ, темле майпа аслӑ шкула кӗрсе вӗреннӗ те, хаљ пӗтӗмпех улпутланса кайнӑ, хресђенсем ҫине сиввӗн пахат̆. Ђисти пӳрократ. Кунашкаллисем ӗҫхалӑхне сийен кӳрсе пурӑнакансем... тесе суйса ҫырнӑ. Ку пӗтӗмпех суйа. Мана тӑса ҫынна пиђетпе вырӑнсӑр лапӑртатнӑ.

Пӗрремӗшӗ епӗ пуп ывӑлӗ мар. Атте пупран тухни 10 ҫул. Ман атте револютси тухсанах йалта ҫӗр кастарса илнӗ. Трутовой хресђене тухнӑ. Унтан епӗ те атте ҫӗрне хресђенсем кӗрӗшсе ӗҫленӗ ђух, суха касси тарӑх пайтах ҫӳренӗ (кураксем хӑваласа). Аслӑ шкула кӗмелли утостоверени тӑрӑх та епӗ токкументтађнӑ трутовой кресйанин тесе шутланатӑп. Авалхи хушамат пирӗн Спассопреттеђӗвски пулнӑ пулсан, епӗ ӑна револютси тухсанах пӑрахса улӑштарнӑ. Ҫавӑнпа пур йенђен те хама хам совет лаптакки ҫинђе (на платформе) тӑратӑп, тесе шутлатӑп.

Комиссарӑвски йулташ сӑмса тутрине кӑларса шывлӑ ҫамкине шӑлђӗ. Унтан графинран шыв тултарса ӗҫрӗ. Хӗрӳленсех ыраt̆.

— Иккӗмӗшӗ епӗ реликни йӑлине пупма кашни ернерех ђиркӳне ҫӳрекен ҫын мар. Пуҫҫапас пулсан манӑн киилтех иккунсем ҫителӗклӗ. Мункун ђух пупсене епӗ йышӑнман, арӑм йышӑннӑ. Епӗ ун ђух Атӑл хӗрне уҫӑлмалла пӑр кайнине курма кайнӑђђӗ. Ун пирки манӑн йулташсем ӗпентерме пултараҫҫӗ. Ҫӑмарта хӗретни, пасхӑсем, кулиђсем пӗҫерни ҫинђен ҫырни те пӗтӗмпех суйа. Ҫӑмарта хӗретнӗ пулсан та мункуншӑн мар, майӑн 1-мӗш тӗлне Интернатсионал кунӗ йаđӗпе арӑм ађасене ваљђи ҫеҫ хӗретсе панӑђђӗ. Тата пасхӑпа кулиђ пӗҫернине «Хӗрлӗ йун» йулташ нийепле те курма пултарайман. Вӗсене йут ҫынна никама та кӑтартман. Ҫавӑнпа та хаҫат ҫине ҫырни пӗртте тӗрӗс мар. Пӗтӗмпех автӑрӑн вӗҫкӗн шухӑшӗсем ҫеҫ пулнӑ.

— Тата мана «Хӗрлӗ йун“ йулташ совпӳрократ тенӗ. Ку сӑмахсем вара, мана ӗҫре тӑракана, ђӗреренех кӳрентереҫҫӗ. Мӗнтен епӗ пӳрократ? Ман пата ӗҫпе пынӑ хресђенсем тулта мӗн шӑнса кӗтсе тӑмаҫҫӗ. Уђрештени кӑриторӗнђе хӑт̆ уруна салтса тӑпӗт. Хӑш ђух кӗтмелли пулатех вӗт, ӗҫ пӗр сӑмахпах тумалла мар. Хут ҫине ҫырса план йӗркипе, ҫӳлтен кӑтартусем панипе тупса майлаштарса инструкси тӑрӑх, тӗп устав калавипе тумасан ӗҫ тӗрӗс пулмаст̆.

— Епӗ кӑнтитатра тӑратӑп. Совет влаҫне ђунтан йуратса хапӑл тӑватӑп. Мана ҫавнашкал ҫынна пиђет урлӑ вырӑнсӑр лапӑртатни киревсӗр ӗҫ. Ҫавӑнпа пур массӑ умӗнђе ҫавӑн пек лапӑртатниђен мана тасатма ыйтатӑп. «Хӗрлӗ йун» кореспотента суйса ҫырнӑшӑн пролеттарин хурҫӑ аллине—тӗрӗс сут умне тӑратма ыйтатӑп, тесе пӗтерђӗ Краснокомиссарӑвски йулташ хайӗн хӗрӳллӗ сӑмахне.

Хаҫата ҫыракансемпе вулакансен халӑх пухӑвӗнчен пирки уҫӑлайман конферентсийӗ*) —Краснокомиссарӑвски йулташа совет аппаратӗнђен тасатас! тесе ал ҫупса шавласа илђӗ.

У.-Турат.

# Ђирлесе вилесрен те хӑрамаст̆.

„Капкӑн“ кӗпђелерне ђас та ђасах Шупашкар хули кооперативӗнђе илнӗ таракана ҫӳпҫапа ҫӑкӑрсем пыраҫҫӗ.



— Епӗ копператсишӗн хамӑн пурнӑҫӑма шеллеместӗп.

— Мӗнле.

— Хура ҫӑкӑр хула копперативӗнђех илетӗп.

---

*) Мункун куп (майӑп 5-мӗшӗнђе) „Хресђен ҫурђӗнђе“ хаҫат-шурнал вулакансен конферентсийӗ пулмаллађђӗ. Анђах соснаттӗлнӑй ҫынсем мункун кун сахал пулнӑ пирки, ҫитсе ернесене (соснаттӗлнӑй ҫынсем нумайланас вӑхӑталла) куҫартӑмӑр. Ретакси.

# Таса атте Ахванаҫҫи.

(Текламатси вађђи).

Поминани ыран тенӗ ђух
Таса атте Ахванаҫҫи
Пулђӗ ханара—
Ӑшӑ сӑрара.
— Хӗритув!
Пайан тунтикун?—
Терӗ сӑра хуҫине
Мӑђ-мӑђ хупса куҫҫене.
— Ҫаплах ара, ҫаплах,
Ҫветтуй атте!
На, тытха тепре,—
Терӗ Хӗритун алтӑрпа парса,
Пуп ҫумне ларса.
Хӗритун арӑмӗ Укҫине
Пахса илђӗ пуп ҫике
Вӑртгӑн, куҫӗ айӗпе.
Пуҫларӗ сӑмах майӗпе:
— Ташласан та йурать, ҫветтуй атте!
Хам парам, тытха тепре.
Йӗрӗҫ ӗҫмеллех,
Ташӑпа вӗҫмеллех.
Ҫӳҫне-пуҫне йара парса
Пуп пуҫларӗ ура хуҫса:
— Ех, ну!
Увђђен-кунђђен-мункунђђен,
Кукӑђ пиҫсе тухиђђен,
Хура халӑх сисиђђен,
Пурӑнӑпӑрха вилиђђен!
Хӗритупӗ кӗслепе
Иађӗ пупӑн ҫеммине:
— Тӗнкӗлти, тӗнкӗлт кӗслеме
Ывӑнмасӑр хам калам
Ҫак ҫветтуй аттене
Урайӗнђе шутарам.
Шурӗ урайӗнђе ҫветтуй атте.
Ех, пулђӗ ҫав—илемлӗ гетте!

———

Тепӗр кунне ирхине
Ђанӗ ђӗнег ђиркӗве;
Утрӗ пуп та мухмӑрла
Ваттисене асӑнма.
Пуҫланђӗ кӗлӗ—поминани:
«Со ҫветтыми уппоккой»
«Со ҫветтыми уппоккой, уппоккой,
Человек то пыл такой, пыл такой,
Ђупил выппит сак!..
— Тпру, стой!—терӗ теђук
— Молотайа шена!—пӗтерђӗ пуп.
Халӑх пӑлханђӗ.
Пуп та лӑпланђӗ.
— Ҫимеонна,
Иоанна,
Темйанна,
Иемелйана,
Харитгонна,
Ҫпиригонна
Титта!
Титта
Имтата-та-та
Титта та, та та...
(Иађӗ кроковек кӗввипе
Таса атте ђиркӳре
Ура утса, ҫутхуҫса).
— Тпру, стой!—терӗ теђук
— Молотайа шена!—терӗ пуп,
Ђарма пыви майрине тытса
Ђуптуса.
Тӗнкӗлти, тӗнкӗлти
Тӗнкки-тӗнкки,
Ӳсӗр пупа халха ђикки!
Ей, та, ну-у!
Халӑх тух та шу-у!
Ҫапла турӗ ваттаваҫҫи
Таса атте Ахванаҫҫи.

Ҫ. ШАПЂАК.

◆◆◆

## Уђрештени ҫулӗ ҫинђе.

— Вађӗ, ма есӗ кайалла килетӗн? Вӑхӑтра ҫитмесен ырӑ пулмӗ.

— Пушша хирӗҫ пултӑм.—Ав уђрештенирен пӗри пушӑ портфӗлпе таварӑнать, кӑларса сирпӗтвӗскер пулнӗ. Ҫи.

---

## Сӑлтавӗ пур.



— Авланма шухӑш тытрӑм.
— Ма васкасах авланмалла пулђӗ тата?
— Копператтив ђеређӗнђе тӑма ҫын сук.



# Тиссимаррисен сăнĕсем

**Ҫтеппанăв Ваҫҫили**—Кавал йаҭейккинҭе партти кăнтитатĕнҭе тăрат̆. Ҭăваш респуплĕнҭи халăха шур ҫăвăх ҫитересшĕн тăрăшнипе, 1927-мĕш ҫулҭен вакунĕ-вакунĕпе Ҫĕпĕртен шурă ҫăвăх кӳрсе, шур кулаҭ ҫийес килекенсене сутнă, вакунĕ-вакунĕпе улма йанă. Копператсипе хăтланма ҭухăнсен вăхăт ҫук тесе, хăй сутуилӳ тунă. Пĕрлешӳре вăй тесе, йалти пуйан-кулакпа, Порис Иссайĕвпа пĕрлешсе тимĕр тавраш̆ĕсемпе сутă тунă. Ку ҫын пур йенҭен те кăнтитат пулма тивĕҫлĕ ҫын (тасатмаллисен кăнтитатне кĕртмеллех).

**Ваҫҫилйĕв Петĕр**—Патĕрйел районĕнҭи Тури Ҭакăра пурнакан парттийтсă. Патшана сирпĕтнĕ кун ирхине тул ҫутăлсан ҫынсем урамалла утаҫҫĕ миттĕнка. Ҫак П. Ваҫҫилйĕв арăмне урама хĕнесе кăларса йанă. Вăл хăй шухăшĕпе: ҫынсем урама праҫнĕк уйавлама кайаҫҫĕ, терĕ пуԓ,—манăн та, патшана кăларса сирпĕтнĕ пек, хам арăма ҫапса сирпĕтес, терĕ пуԓ. Мĕскĕн арăм нисҫта кайма пĕлмен. Вара йалканаш претҫетатгĕлĕ Ваҫҫилйĕв арăмне, Турханти хвершăл патне, халăх лав парса, суранне ҫыхтарса тӳрлетме йанă. Ҫавăн пек хастарлă, хĕрӳллĕ ĕҫлет хĕрарăмсем хушшинҭе. Анҭах хăй, мухтанма йуратман пирки, хăйĕн хастарлăхĕ ҫинҭен Контроԓ Комиҫҫине пĕлтерме каламаст̆.

**Ҫтеппанăв Иван**—Кĕҫĕнйелҭĕк районĕнҭи Тускел йăлĕсем. Ҭышкисене ҭăмартаса ҫӳрекен парттийтсă. 1922-мĕш ҫулта пĕр хĕрарăма, ăс парас тесе, ҭышкипе ҫапса ҭут̆ вĕлермен (уншăн сутра айăпланҭĕ). 1920-мĕш ҫулта, ĕҫҫыннисем тăшмансемпе вăрҫнă вăхăтра, унăн, парттире тăнă йĕркепе, Хĕрлĕ ҫара каймалла пулнă, анҭах кайас мар шут тытса, парттирен вăл вăхăтра тухса тăнă та, краштăн вăрҫине кăмака ҫинҭе выртса ирттернĕ. Краштăн вăрҫи пĕтсен кăмака ҫинҭен анса каллех парттийа кĕрсе тăнă (ун ҫинҭен кăтартакан хутсене Тутар респуплĕкĕн Елкел вулĕҫтăвкомĕнҭе шырасан тупма пулат̆). Ҫтеппанăва халĕ ҭухăнсем кулак теҫҫĕ, йаҭейккăра—партти ҭленĕ, теҫҫĕ, епĕр тасату ҭленĕ теттпĕр. Хăшĕ тĕрĕссине Контроԓ Комиҫҫи татса парĕ.

**Ухваӊ Хветĕрĕ**—партти ҭленĕнҭе 9 ҫул тăрат̆. Кампаиисенҭе вирлĕ ĕҫлет. 2—3 ҫул ĕнтĕ тырă хатĕрлес кампанире, Канаш стантси йенҭен тырă кӳрсе, Иурĕн пасарне (Мари оплăҫ), тата ытти тырă хаклă пасарсене кайса сутса, хăйне ваԓԓи укҫа пухас кампанисем туса ирттерет. «Маркҫист». Ҫавăнпа аҭине Маркс тесе ҫыртарат̆ Сакăсра. Сакăсран тухсан пуп патĕнҭе аҭи йаҭĕ улшăнат̆—Маркспа Марк пулат̆. Пухура хăйĕн хырăмне хыпашласа: тырра хысна хакĕпе сутсан, пирĕн выҫă ларасси курăнсах тăрат̆; копперативва шансан нумайах хырăм тăрантарас ҫук, тенĕ. Ухваӊ Хветĕрĕ, промышлĕнnăҫа ӳстерес тесе, сăмакунккă йухтарнине милитси те курнă. Сăмакун ҭустиллĕ аллине Контроԓ Комиҫҫи пырса тасатасси паллах.

**Миронăв П.**—Куславкка районĕнҭи Пайметсем. Партти ҭленĕнҭе 2 ҫул тăнă, пĕре те... ларман. Ҫав икĕ ҫул хушшинҭе Маркс ҫырнă «Кăпиталпа» паллашасшăн пулнă та, тĕлне пĕлмесĕр урăх кăпиталпа паллашса кайнă. Пайметри кивҫенлĕх йулташлăхĕнҭе каснаҭей пулса ĕҫленĕ ҭухне, йулташлăх кăпиталĕпе паллашса, ăна ытараймасăр хăйне илнĕ (225 тенкĕ) ĕмĕрлĕхе. Халĕ ăна парттирен кăларса тăратнă та, анҭах... лартайманха.

---

## Кам хаҫатра мĕн ҫинҭен ҫырнине вулат̆.

**Каҫҫир**—Сут пайне.

**Артист**—Театăр пайне.

**Усламҫă**—Тавар хакĕсем ҫинҭен.

**Ҫамрăксем**—Пулни-иртнисене.

**Совет слушăшҭи**—Пулас сокрашҭенисемпе аппарата тасатассине.

**Хаҫата ҫыракан**—Хăй ҫырнă саметкăсене.

**Аслă вырăнта ларакан**—Опесаттĕлнăй постановленисене.

**Йалкор**—пуштă йешҭĕкне.

**Пурте**—пĕлтерӳсене (опйавленисене).

Санăн арăму ҫеҫ нимĕн те вуламаст̆, мĕншĕн тесен сан пирки вăл хаҫат вуламаллăх вăхăт нийепле те тупаймаст̆.

# Уй-тире таса тытасси.

Аллусене çусах тăр. Апат çиес умĕн аңҫах мар, апат çинĕ хыççăн та çу. Шупашкарта пурăнакан çынăн таракапна пĕçернĕ çăвăра тытсă, алăсем вараланаççĕ. Тасамар алăллă çынсене тĕрмене хупаççĕ: вçаткă, растраттă, вăрă ҫăрĕсем тасамар алăллă пирки пулаççĕ. Çăвассине сылтăм аллупа сулахайне, сулахайпе сылтăммине çу (алла ал çăвать тенĕ ваттисем). Апла çусан тĕрмерен те хăтăлма пултаратăн.

Куç-пуçа таса алăпа ҫас та ҫасах çăвас пулать, таса мар алăпа тытма йурамасть. Унсăрăн куç пăсăлса куçа тем те пĕр курăнма пултарать. Сăмахран, ваттисем каланă тăрăх, витĕр мар куçлă çын турра курать.

Çăварпа пырна кирлĕ мар йапала кĕртме хушмаççĕ, сăмахран, пырна пула пуçна çиме хушмаççĕ. Апат-çимĕç çинĕ хыççăн пыра тăвар шывĕпе ҫўхемелле. Ерехпе ҫўхеме йурамасть.

Ура ҫĕрнисене кассах тăр, ахалĕн хаҫ аңҫах илĕ атту витĕр ҫĕрнў тухма пултарать. Урусене ан тарлатгар. Уру тарланăшăнах тар йухтарса ĕçлекен çын шутне кĕреймĕн. Кашкăр тытма кайнă ҫухне уруна çу сĕр—(кашкăра курсан тарма лайăх пултăр тесе). Пĕр сăмахпа каласан, уруна лайăх пăхса усра,—мĕншĕн тесен ваттисем: усала ури тăрантарать, тенĕ.

# Вăйлă уҫитлĕ.



— Канаш районĕнҫе питĕ вăйлă уҫитлĕ пурăнать.
— А-а-а леш. Потупвăй мар пулĕ?
— Çук. Ипатги йатлă.
— Мĕнле питĕ вăйлăскер вара вăл?
— Аҫасене пĕрре çапсан, виçĕ кун ҫăрлеттерсе выртгарать. Ваçухха С.

# Шăкапа лĕпĕш.

(Ирптару).

Шăкапа лĕпĕш туслашса
Ерлеме шутланă,
Тумтирсем çĕтĕк сăлгавпа
Пайтах асапланă.
— Но!.. терĕ шăна,—
Лĕпĕш, ес манăн хăва!
Кун пек пурăнма йурамасть,
Хăвăртрах ĕçлеме тытăвас.
— Тытăнас! Тытăнас!—тет лĕпĕш,
Хĕрўллĕн калаçаççĕ иккĕш,
Ыранах акас кантăр—
Штоп сўс нумайлантăр.
— Ееc, терĕ кăшт тăрсан лĕпĕш,—
Хаҫ çулла, тумтир пит кирлех мар,
Ашă ҫух пурăнма илемлĕ.
Ун çинҫен ўлĕм çех шукăшлар!..
— Ҫăн, терĕ килĕшсе шăна,—
Аванах кĕтĕм тăна,
Тумтир вăл кирлĕ хĕлле тин.
Мĕне кирлĕ уншăн хаҫ ĕçлени!

* * *

Перее çитрĕ кушган раштав.
Пур çĕртен те сивĕ ҫĕпĕтет.
Хайхи леш лĕлĕшпе шăна
Тухса акрĕç сўслĕх кантăрне.
Шутсăрах васкаса ĕçлеççĕ
Нипоҫҫом, пурнăпăр халĕ, теççĕ.

Аттай.

# Ваттисем калани вырăнлă пулнă.

Каскаламасăр çĕçĕ аври те пулмасть, тенĕ прэтçегаттĕл хăйĕн çинҫен çырнă çтена хаçаҫĕ саметкине касса илсе.

Кивĕ çынтан çĕнĕ çын тума хĕн, тенĕ упăшки арăмне хĕнесе ывăнсан.

Çуртра тиркĕ-çăпала шăлгăртатмасăр пулмасть, тенĕ пĕр хăна хуçи пуçне алтăрпа шаккаса.

Пуйан пурăнас тесен, кăмака çинҫе вырма йурамасть, тенĕ пĕр кахал хăй выртнă кăмаки ишĕлсе ансан.

Пурте хатĕр: çуни Хусанта, хăмăҫĕ пасарга, тенĕ йалти пошарнĕк пушар сўнтерме кайас умĕн.

Ерлесе тупнă укçа вилиҫҫенех тăрантарать, тенĕ 20 тенкĕ шалу илекен нумай çемйеллĕ сторăш вилме выртсан.

Пайан тумалли ĕçе ырана ан хăвар, тенĕ те пĕр рапоҫи, тунтикун ĕçлеме тухман.

Çынна тумтир хитрелетмест, çын хăй тумтире хитрелетет, тенĕ майра кăкăрĕсем курăнмалла тумтире тăхăнса.

# Уйăрласси мăшăрланасси мар.

Тĕрлемесри Ваçухха Хĕветĕрĕн пĕртен пĕр йуратнă арăмĕ 1922-мĕш çулта питех те тутлă йĕхăпа çывăрса кайнă пулнă. Хĕветĕр йна айхăран вăратасçĕ тесе, темĕн çухлĕ силленĕ, тем çамрăк шухăш килсе кĕнĕрен вăранмасть пулĕ тесе, ватă пуçĕмĕпех ытаьаса та çуп туса пăхнă, лешĕ çапах вăранман. Пĕр икĕ кун кĕрмешнĕ хыççăн, Хĕветĕр хĕвел тухиççенех тупăк тăвать те, арăмне çăва çине ăсатать.

— Выртах, Çывăр. Манăн çине ан ÿпкелен, епĕ айăплă мар. Сана ĕмĕрлĕх йăкă хайĕн ÿтгирсĕр мăнă аллисемпе ыталанă. Кĕĕ ĕнтĕ тепек манăн мăшăр мар, тесе Хĕветĕр кил йенелле пĕр çавăрăнса пăхмасăрах çăва çинçен тухса утрĕ.

Пуçĕнçе темĕнсем шавлаççĕ, шаккаççĕ, шăхăраççĕ... Хĕветĕр, халĕ пĕтсе çитнĕ майĕпе, аслă çулăн ватă хурăнĕ кутĕнçи çерем çине кукленсе ларçĕ. Куçĕнçе куççуç. Пуçĕнçе пĕр шухăш пуç мимисене пăтратать:

— Мĕнле пурнас? Кампа çуна йăпатса ĕмĕре ирттерес? Кам апат пĕçерсе парĕ? Кам çитмасем çĕтĕлсен саплĕ, çăвĕ. Ка-аьши...

Пĕççен пурнăçăн тумхахлă, ерешмен картисемпе каркаланса пĕтнĕ сукмакĕсем Хĕветĕршĕн ватă çери çумке тискер çĕлен авраланни пекех туйăннă.

— Ну кама? Кама илес?!.

Хурăн каламасть...

— Кама, конешнă, Укахйене. Урăх увăн пек маттур арăм есĕ тупас çук, теççĕ кÿршисем Хĕветĕре.

Укахйе çăвах та ĕнтĕ маттур арăм. Çамрăксем «вăрмансене кайсассăн илемшĕн йурийех тĕрлĕрен çеçексем пухмашкăн йуратаççĕ. Укахйе те çавнашкалах. Пĕр çынна пурăнса ирттерме телей «тупайман» парки виçĕ арçынпа пурăнса виçĕ аçа çуратса ÿстернĕ. Хĕветĕр хăйĕн мĕн пур йун тымарĕсенçен канаш ыйтать:

— Мĕн тăвас? Илес-ши? Илес марши? Укахйи йăпăлтатать.

— Çак тарана çитсе епĕр иксĕмĕр те телейлĕ пурăнăç курман. Турă, епĕр иксĕмĕр пĕрлешсессĕн çеç, телейлĕ пурнăçпа пурăнмашкăн пÿрнĕ пулĕ. Ил мана. Епĕ сана ватла киле хамăн паттăрлăхпа савăнтарăп... Арăму вилнĕшĕн ан хуйхăр, тет килне пырсах.

1923-мĕш çулта пĕрлешеççĕ. Хай Хĕветĕрĕн Укахйепе çăвах та калама çук телейлĕ пурнăçĕ тапранса карĕ: Укахйе Хĕветĕрĕн вилнĕ арăмĕнçен хăрамасăрах, Хĕветĕре хĕнемешкĕн те пуçларĕ.

— Ех-хе-хе! терĕ пĕрре Хĕветĕр Укахйи айак шăммисене шутласа тухнă хыççăн.— Сута парас. Унсăрăн ĕç тухмасть ĕнтĕ, тет Хĕветĕр шанçăклă кÿршисене.

Утмăл çиçĕ çулхи старикпе хĕрĕх çиçĕ çулхи Укахйи Куславккари Халăх сучĕн «Килĕрех»! тесе çырнă сакки çине кайса лараççĕ.

— Пĕлместĕп, мĕн пулнă-ши мана? Ухмах çав, ухмах. Ÿлĕмрен туршăн та старике хĕнеместĕп. Халĕ епĕ йна хам та хĕрхенетĕп, тесе Укахйе сутран касару ыйтать.

Сут çеç мар, пĕр çыл̆ăха такам та касарать, теççĕ. Укахйе Хветĕре сутран тухнă çухне «под ручку» илет...

Ну, халĕ ĕнтĕ çылăха советла сут умĕнçе касарттарнă хыççăн, Хĕветĕрпе Укахйен малтан асăннă „турă пÿрнĕ“ телейлĕ пурнăçĕ тин çеç тапранса карĕ.

Сутран тухсан çул тăршшипе Укахйе шĕвĕркке çуçсемпе ватă шăмшак тарăх шăйăрттарса, аçашласа пынă хыççăн, Хĕветĕр киле çитсенех пуçне çĕтĕк аçампа çÿркет те, çывăрса кайать. Ватла киле пиçĕ-куçĕсем çине çас-çасах шишкăсем туха-туха ларнипе, Хĕветĕр çын куçĕ умне курăнмашкăн намăс тесе, кÿрĕше те тухмасть.

— Астăр. Хĕветĕр. Манăн пурнăçăн йулашки кунĕсем çывхараççĕ. Вилсен каллех малтанхи арăмпа пурăнма пуçлăп, тесе Хĕветĕр пĕр шарламасăрах пурнать. Кун иртет—кас пулать. Кас иртет—каллех кун. Хĕветĕр 1925-мĕш çулçен кĕтет, вилĕмĕ пĕртте çук.

— Витнă мана турă нумай пурăнмашкăн çырнă. Кĕтсе пулмасть. Укахйене уйрас, теме пуçларĕ пĕр ирхине Хĕветĕр.

Шухăшлана—тунă.

Сут Укахйене уйăрас, пĕр ампар парас, терĕ.

Укахйе товоçнай мар пулса шалăпă парать. Кăштах Укахйе майлăрах тусан, Хĕветĕр шалăпă парать. «Шалăпă» çулĕ ытла та вăрăммине кура Хĕветĕр шалăпăпа сут çине сурать те, Укахйене сутсăрах уйăрса каларса йамашкăн май шырама тытăнать.

Пĕр майлă шутлать, 3×3-7 тухать. Тĕрĕс мар. Капла ĕç тухмасть. Тата тепĕр майлă шутлать, 3×3-3 çеç тухать. Кун пек те ĕç пушшех тухмасть.

— Е-ех, пурнăçра матĕматтĕккăна пĕлни питех кирлĕ те, анçах ĕлĕк вĕренмени хуплать, тесе куйланать Хĕветĕр хута вĕренменшĕн.

Çилайççен шухăшласа, çынсенçен те ыйткаласа çÿренĕ хыççăн, Хĕветĕре 3×3-9 пулассине такам та каласа панă.

Хай патне пурăнмашкăн Ентрей Тимушне илсе пырать те çурт-йĕрне йăлтах унăн çине çыртарать.

— Ну, халĕ ĕнтĕ, Укахйе, сывă пул! Çурт-йĕр манăн мар, манăнне вунă çул сут-

ласшан та йулашки ҫытмаьа хывса илеймӗн...

Укахйене Хӗветĕр хăравҫă йăтăсемпех Тимуш хыҫне пытанса: Хам! хам! тесех хўтерсе кăларса йграт̆.

Каллех пӗҭҭен. Каллех ҭуна йăпатса ӧмӗр ирттӗрмешкӗн мăшăр шырамалла. Анҭах кама илес? Хӗветĕр хӗллехи сивӗ кунсемпе хăйӗн Укахйе ҫиве сиввĕн пăхасси те иртсе кайнă хыҫҫăн, ҫулахи ăшă кун ҫуттипе каллех Укахйеве тепӗр хут ҫавăтса пыҭӗ.

— Ну, халĕ ӗнтӗ, Тимуш, есӗ сывă пул!

Хӗветĕрпе Укахйе йалти йатлă ҫынсеве ҭӗнсе пырсах, Тимуша хăваласа кăларса йараҫҫӗ. Лешӗ урай варне пӗрре лаҭ! сурҭӗ те тухса сирпӗнҭӗ.

Пурăвăҫ малаллах шăват̆. Ҫуллахи ăшă кунсем иртсе кайнă хыҫҫăн, кӗрхи сивӗ ҫилсем вӗрмешкӗн пуҫларӗҫ. Хӗветĕрӗн йăвăҫсем ҫинҭи ҫўлҫӗсем пекех ҫўҫ пӗрҭисем тăкăнма та тытăнҭӗҫ.

— Ы-ых, йăтă! Мӗн сана ӗҫлесе тăрантармалли пур харам пыра. Марш, тухса кай!.. терĕ Укахйе Хӗветĕре, каҭҭа пырсан виҫĕ уйăхран.

Хӗветĕр, хирӗҫ ҭӗкес мар, вăрҫă кăларас мар, аванах пурăнас тесе, Укахйен кӗрхи савӗ ҫил тăвăлӗ иртсе кайиҭҭен, йалтан тухса вăрман йенелле утрĕ.

Ҫанталăк пăсăлат̆ те, каллех тўрленет. Анҭах Хӗветĕрпе Укахйе хушшинҭи тавлашупа ҫапăҫусем пайанхи кун та пӗр улшăнмасăрах пыраҫҫӗ. Хӗветĕр аитранă йенне, ăҫта-ши арҫынсен хутне кӗрекен кантур?—тесе ыйтат̆ хăйӗпҭен. Анҭах пуҫ мими ырĕнҭи ыраш пуҭаххисем ăна хирӗҫ нимĕн те ҭӗнмеҫҫӗ. Н. КВАС.

◆◆◆

## Ыйтса тĕпҭени.

Ӗҫӗ ҫапла пулнă. Пӗр растратҭӗк копператтив укҫине ытла та нумай салатса йанă. Вара аптравипе шыва сикнĕ, телейе ăна ҫынсем ҫăлнă. Кайран вара ҫынни ҫапах ҫакăнса вилнĕ. Топрос тума пырсан ҫакăнвă ҫынăн аҭиве калавă: аҫуна ес ҫакăнасран ма сыхламан, вăл малтан шыва сикнике есӗ пӗлнĕ вӗт, тенĕ.

Ҫакăнакан аҭи: атте йӗп-йӗпех килҭӗ, еп сарай шăтăкӗнҭен пăхсах тăтăм. Вăл пăйав илҭӗ те ҫакăнҭӗ, епĕ ăна типшĕнме ҫакăнҭӗ пуҭ терĕм, тенĕ Йаринке.

## Ҫын сăнĕ.

— Ҫуркуннехи ҫилпе питсем куштăркаса карĕҫ. Хам сăна хамăн курас килми пулҭӗ.

— Курас килмест пулсан санăн апла сăнна пӗтĕмпех ҫухатмалла. Пӗтĕмпех ҫухатмашкăн пӗр-пӗр пўрократ патне ӗҫлеме кӗмелле.

## Ӗҫ пултарулăхне ўстересси.



— Ма ир тавăрнатăн киле?

— Саҭатти вăхăтĕнҭех ӗҫ хăватне хăпартасси ҫинҭен сопрани турăмăр та, сопрани хыҫҫăн пурте салантăмăр.

## Ҫуркунне.

— Ак, ҫуркунне те ҫитрĕ: кунсем вăрăмланаҫҫӗ, ҫӗрсем кӗскелеҫҫӗ—кăштах тăрсан ыҭăхсене кăларса йараҫҫӗ.

— Пирӗн уҭрештенире те ҭеретсем вăрăмланаҫҫӗ... кăштах тăрсан пирӗн пеккисене кăларса йараҫҫӗ.

# Паллă çынсем, выљăх-ђĕрлĕхсем, хăйматлăхсем.

Пĕр йалта, пĕрле пурăнсан та йал çынҫисем хăйсен хушшинђи паллăраххисене, уйăрмаххисене ђыс тума пĕлмеççĕ. Хăшĕ хăй ĕçĕ айне путса йалта мĕн пулнине курмасŤ, тепри курсан та, «курман илмен» пулса калама хăраŤ.

— Маншăн пулсан пуç хĕрлĕ: усалпа çыхлансан усси пулас çук.

Ыттисем тата ун пек йапала çинђен, хăйсем хурăнташлăхпа «систерме вăтанаççĕ».

Йал çынҫисем çапла ўркенуллĕ хăтланнине епĕр хамăр «талантсем» çинђен пĕлмесĕрех йулатпăр. «Паллă çынсем» çинђен халăха пĕлтерме кирлех, унтан мĕнле усă пуласси курăнсах тăраŤ.

Малашне йалпа çирĕп çыхăну тытса тăрас тесе «Капкăн» уйрăм «посланисем» йарса тăма шутлаŤ. «Паллăрах» çынсем пурнăçне кирлĕ таран пĕлсе, вĕсен пурнăçне «çутатса» кăшкине тивĕçлĕ «накрата» парас тесе, «Капкăн» хăй ђĕппписене вырăнсене салатрĕ. Експонатсем ђылай пухăнђĕç. Малашне пĕрерĕн-пĕрерĕн кăтартса пырăпăр.

Кунта икĕ йалти паллă çынсем çинђен çырса пĕлтерĕпĕр (ыттисем ђеретре).

1) Атласкĕн Ахванисĕ çинђен, унăн паллă ĕçĕсем çинђен пĕлмесĕрех йулнă пулаттăмăри тев? Шăмат йалĕ (Иетĕрне р.) çынҫисем пушанаймаççĕ курăваŤ, «тĕпĕ-йĕрĕпе» çырса йараймаççĕ, анђах Атласкĕнăн лашипе ĕни пит тарăхса çитнĕ, çавсем ђĕререн тарăхса, çырса пĕлтерђĕç, хăйсен «паллă хуçи» çинђен.

— Пĕлтĕр октăпĕр уйăхĕнђе сут пулнăранпа пире хуçа апатсăр тарăхтараŤ, аран çўретпĕр, темĕн çава тухайăпăри? Çава тухсан йешĕл курăк çисе кăй илĕттĕмĕр те, темĕн çав, тесе куççул йухтараççĕ ĕнипе лаши те.

Кĕскен калас тесен ĕç çапла пулнă.

Атласкĕн Ахванисĕнђен арăмĕ уйăрăлса кайсан, сут асăннă уйăхра Луккери вађђи упăшкинђен выљăх-ђĕрлĕх, тырă (мĕн пурĕ 191 тенкĕлĕх) илмелле тăваŤ, анђах Луккери Иетĕрнене (50 çухрăмран) 4—5 хут кайсан сутисполниттĕл ăна тивĕçлĕ йапаласене «илсе параймана». Ахваниç, выђăхсем пур пĕрех мана пулмаççĕ тесе, пĕлтĕртенпе ĕретлĕ çитерме ђăрăнаŤ.

— Ман картишĕнђен утса тухса кайсан, çул çинђе хăŤ ўксе вилђĕр, тет вăл.

Çавăн пирки выђăх-ђĕрлĕхсем макраççĕ, тарăхса çыру çырса йађĕç. Лаши кĕçенет, ĕни мĕкĕрет.

Му-му-у!

Сурăхĕсем макăраççĕ: ме-ме, иртрĕ пурнăç—ме е!

Ун пек »паллă хуçа» патĕнђе пурăннăшăн мар, сутисполнитĕле вăрахланăшăн тарăхса вăрçаççĕ.

Шел, шел, ун пек хуçа патĕнђе пурăнмалла мар вĕсем, такçанах Луккери патне леçсе йамалла.

2) Малти Трак йалĕ те (Çĕрпў р.) пайантан вара ђапа тухма тивĕç. Унта пĕр «кений» пурнаŤ. Хăй кăна та мар, пĕтĕм хурăнташĕ, ратнипех «ђаплă» вĕсем.

Пĕр сáмахпа каласан Кусков пит «ырĭ» çын вăл, тĕнђере хăй çеç пуйан пурнасшăн мар... Хурăнташĕсене те манмасŤ. «Майак» çутипе хăйĕн кăмăла кайнă тăванĕсене хăй патне ăшă çĕре йăхăрса илет.

Виçĕмçул иввалигсен «Майак» йатлă ертлĕ уçăлсанах Кусков правлени претçетаттĕлне кĕрсе ўкет те, хваттере хăйĕн хăйматлăхĕ (кăшт çеç хăйаматлăхĕ тесе йараттăмăр) Иусман патне куçаŤ.

— Иута укça тўлиђђев, хам тăвана тўлес—шухăшлаŤ вăл хăйĕн „ăслă“ пуçĕпе.

Пыра-киле мунђала склаđĕ ваđђи прикашђĕк кирлĕ пулаŤ. Ун пек ответлă ĕçе кама шанас тетĕн, тăвантан «лайăх» ĕçлекен урăх тупма çук. Кусков, конешнĕ, вумай шухăшласа тăмасŤ, хăйматлăхне Иусмана тытаŤ.

— Ĕçле, ахађ тумăп.

Хăйĕн ĕçлеме вăхăђĕ çук, мĕншĕн тесен вăл, кунтан пуçне «Çирĕклĕри машшин йулташлăхĕн» сђеттовоđĕ пулса тăраŤ. ПултараŤ аври, тĕлĕнмелле, ун пек «паллă» çынсене çырса палăртасах пулаŤ. Çав йулташлăхра сђеттовот çеç пулсан та, майĕ-майĕпе пĕтĕм ĕçе хăй аллине илет.

— Епĕ оппăтнăй çын, тет вăл. Ыттисем шанаççĕ, ăна ирĕк параççĕ.

Кусков ĕçе çавăрма тытăнаŤ. Малти Тракра хайхи хăйматлăхĕ патĕнђе тепĕр склат

---

## Тасату умĕн.



— Ну, пупсем савăнаççĕ ĕнтĕ тасату пирке!

— Мĕншĕн?

— Ара ђиркўве çўреççĕ, тет.

— Камсем?

— Уђрештенирисем. С.

# „Йетинстваˇ" хапрăкĕнђе.

Тула тухмалли вырăн пит йапăхса кайнă пирки, рапођђисем ђартак çине хăпарса, вешăлккă пулĕмĕнђе „йухтараççĕ".

(Еç Комиссариађĕн санинçпекторĕ „Йетинстваˇ" хапрăкне пăхса тухнă актăран)



— Ма пăрăнмастăн? Çÿлтен шыв анаˇт.

— Кунĕпех анаˇт вăл!.. Упорнăй çук пирки рапођђисем «йухтараççĕ».

---

ђçаˇт, приккашђĕкне, копешнă, Иусмана хураˇт.

— Шанђăклă çын, хурăнташ. Хăйматлăх. Ахăр хăçан та пулсан вăл та мана кирлĕ пулĕ. «Йĕмĕр сакки сарлака» вăл.

Пĕр сăмахпа каласан, Иусман хăйматлăхĕ шалу илнĕ ђухне алă пусса ĕлкĕреймест, хваттершĕн, пĕђђенех икĕ прикашђĕк, саветуйушђи, т. ыт. те. Капла хăтлансан мĕн пуласси çинђен шухăшлама та вăхăт çук. Ăçта-а унта! Анђах Коппинсойус инструкторĕ тепле пĕрре унта пырсан, Иусмана пĕр вырăнĕвђен хăтараˇт, ун вырăнне урăх çынна лартаˇт.

Виç-тăват вырăнта ĕçленипе хăнăхнăскер, Иусман шухăша каяˇт, анђах уншăн шухăшлакан ун хăйматлăхĕ Кусков пур, «кенин». Вăл тем те шухăшласа кăларĕ.

— Шалу сахалланђĕ манăн, мĕн тăвас, йытаˇт унтан Иусман.

— Ек, сана, ес калиђђенех тепĕр «аша вырăн» тупса хунă—кулкалаˇт Кусков.

— Мĕнле вырăн? Ну, арçын есĕ! Вăт хурăнта-а-аш! Тырă пухмалли склат уçрăм, йулташлăх йађĕпе, çавăнта прикашђĕк пулăн. Иураˇт-и? Хе-хе-хе. Пуç ĕçлет манăн, хе-хе-хе!

Ну кур аллăна—çавăрса илет ун аллине, ĕмĕр манмăп—сиккелет Иусман.

Шăхăрса çеç пурнаˇт вăл: ку хăйматлăхпа çухалас çук! Анђах пурăнсан — пурăнсан ăна пĕр инкек килсе çакланаˇт.

— Налук тÿлемелле!

Тĕнђере йепле пурăнмаллине хăй те ђухласа илет, Кусков вĕрентекенĕ вĕт.

— Шалу мĕн пурĕ те 25 тенкĕ илетĕп, çĕр тара илсе акман нихçан та... тесе пĕлтерет (тара илсе çĕр акнине пур те пĕлеççĕ). Налук çписки çинђе нимĕн те мар.

Хађ микуна куç пек кĕтеççĕ, анђах микун хыççăн тасату пулса иртмелле. Тасату прăçнĕкне кĕтеççĕ-ши вĕсем? Çапла тăрăшса ĕçленĕшĕн «накрата» пама манас марђĕ. Комиççпре куриђђен сывă пулăр!

Капкăн тусĕ.

◆◆◆

## Ђасси çинђен.

— Мĕнле-мĕнле йышши ђассисене пĕлетĕн есĕ?

— Путелнике, кукукла çапаканнине, икĕ тукмаклине, хăрах тукмаклине, алла çыхса çÿремеллине, кăсйере ђиксе çÿремеллине, тата ыттисене те нумай пĕлетĕп.

— Çук, пĕлеймерĕн.

— Тата миçе сурт пулаˇт ђасси?

— Ђасси мĕн пурĕ те икĕ сурт çеç пулаˇт вăл. Пĕр суртĕ—йрпе пит кайа йулакавни, каçхине сĕмсĕр мала кайакавни. Вăл уђрештенири ђасси. Иккĕмĕш суртĕ—йалавах пĕр пек кайакавни. Вăл сехет тăрăх ĕçлекеннисен. Пăђăр.

# Телефон тăрăх майрипе калаçни.



— Луççă, кăмака хыçĕнђе унта хутсем выртаççĕ... çавăнта, çавăнта—кăмака хыçĕнђе. Пăхха—наккас çук-и унта? Çук тетĕн?!. Апла пулсан краваţ айне пăхха... Краваţ ури айне темĕскерле хутсем ĕнер хуçлатса хутăм... Çавăнта пуђ... Тупрăн пулсан прислукăпа йарха. Отђот çырма кирлĕ.

---

# Павăл Ђерккинăн телейлĕ кунĕсемпе хуйхăллă кунĕсем.

### 1.

Павăл Ђеркин Шупашкарти пĕр уђрештенин слушăшђийĕ, вăлах МОПР ђленĕ, партти ђленĕ, вăлах профсойус ђленĕ, вăлах т. ыт. те, мункун çитнĕ май йала аса илет. (Шеф йалне шеф ĕçĕпе кайассине мар, вулакан йулташ, ес ăна асра тыт!). Аса илет те, ир те каç та уя пуçĕнђе çав шухăшах вĕрет.

Мункун йалта хулари пек мар. Ĕçки-çики те, сăри-ерехĕ те, пĕр сăмахпа каласан, пурте пур ун ђух йалта! Çавăнпа та, мункун виçмене тенĕ ђух, пĕр ик-виçĕ кун прокул тăвас тесе, куђăр тытсах йала çĕмĕрттерет Ђеркин...

### 2.

Ыран мункун. Ђеркин йалта. Ђеркин йала килнине йалĕпех пĕлнĕ. Пурте курасшăн ăна. Хуларан килнĕ çын вĕт.

Ђеркин килнĕшĕн пуринђен ытла йађейккă çекретарĕ хĕпĕртенĕ.—Мункун каç тĕне хирĕç тăвакан веђђĕра лайăх иртеретпĕр ĕнтĕ парттийтсă Ђеркин пулăшсан, тесе хĕпĕртенĕ вăл.

Авђах йађейккă çекретарĕ:—Ђеркин йулташ, тĕне хирĕç тăвакан веђђĕра иртерме пулăшăрши пире? тесе ыйтсассăн, Ђеркин ăна хирĕç:

— Оттыха килнĕ вĕт епĕ. Ĕçлес... ĕçлес пулсан хулара та... тесе „тирпейлĕн" çатлаттарса хураţ.

Вулакан йулташ, кайăн „оттыхра" ĕçлес килĕ?! Манăн, ўкĕте кĕмен автăрăн „керойĕ" те çавах.

### 3.

Вĕреçсĕ, кĕрлеççĕ мункун кунĕсем йалта. Хуларах сурђăк çăтакан Ђеркина пурнăç çитрĕ! Пĕр кĕрекерен тепĕр çын кĕрекине сĕтĕреççĕ хайхи хуларан килнĕ ђынлă хăнана.—Ех, пурнăç кунта, йалта... Премĕ рай! тесе тĕлĕнет Ђеркин. Пайан ĕçет Ђеркин, ыран ĕçет... татах ĕçет. Пайан картус (вăрăм сăмсаллине) çухатаţ, ыран портфĕлне çĕтерет, тата малалла пуçне те ђуţ-ђуţ çухатађђĕ (харкашура, çапăçура!). Çитмен кĕреке йулмарĕ Ђеркинтан йалта. Пуринђен ытла усламăç Петĕр Иакравђă кĕреки килĕшрĕ пулас ăна. Пылĕ, çуттти, сăри, саккуски,—пурте тулăх...

Çавăн пек „оттыхпа" çак епĕр лайăх паллашнă ик-виç кувна прокул тума килнĕ „керойăн" „прокулĕ" икĕ ерне йахăнах ђăсăлаţ. Иулашкинђен пĕр илемлĕ уйар кун Петĕр Иакравђă тарçи пăр лашаллă рессорпах хулана ăсатаţ Ђеркина.

### 4.

Татах тытăнђĕ Ђеркин хутсене тĕрлĕ-мерлĕ вĕçтерсе ĕçлеме. „Ĕçлекелет" Ђеркин уђрештенирех. 10 сехет тĕлнелле пыраţ те уђрештенийе, кăнтăрла иртсен 2 сехет хыççăн шăрши те йулмаţ Ђеркинăн уђрештенире.

### 5.

Анђах Ђеркинăн уђрештенире савăнса тĕрлĕ-мерлĕ хутсене вĕçтерсе ĕçлессине, вашкăй хутсем çырса ларассине хăвармалла пулаţ. Сиксе тухаţ таçта хăйаматран уђрештенисене сурђлассипе партти ĕретне тасатасси те, ђасах Ђеркина уђрештениреи те, партти ĕретĕнђен те шăлса хураççĕ.

———

Ђеркин халĕ килтех тĕрмешсе пурăнаţ. Тĕпессе ăна хаљ Ђеркина тесе ђĕнмеççĕ, простă Пăнђăк Павăл çеç теççĕ йалтисем.

Ив. Пăђăр.

---

# Телефонпа хирĕç калаţ.



— Кăмака хыçĕнђе тетĕн? Иураţ... Пăхам... Унта ђăвашла çырнă сайавленисем çеç. Тупрăм. Проиsвотствă планĕ те пур унта. Прислукă йерçмест те... Ну, йурĕ. Манне çўç уçса йарсан йарăп...




Ретаксирен: Ку Аттайăн охохохохо! тесе кулма хушнă сăвви тага пуштă йешђекĕ, тĕрлĕрен вактăвек, пуҫа кĕнĕ шухăшсем, „Капкăн“ сатађђисем, ыйтусемпе ответсем кĕртмелли вырăна пĕр пÿрократ хăйĕн кăпинеђĕпе, сĕтелли-мĕнĕпех кĕрсе ларнă та, пĕтĕм вырăна йышăнса илнĕ. Тух тесессĕн те тухасшăн мар.


**„КАППĂН“** ҫулталăклăха сырăнса илекенсем „КАНАШ“ хаҫатăн

**ИККĔМĔШ ПЫСĂК ВЫЉАВĔНЂЕ ТĂМА ПУЛТАРАҪҪĔ.**

# Çĕмĕрле савăтĕнђе.

Çĕрĕç комиссариађĕн коллеккийĕ саççетаки туса, Çĕмĕрлери туса пĕтерне савăта туса лартма вырăн тупса панă.



— Мĕнле хыпар пур сирĕн савăтра?
— Лайăх хыпарахĕмар. Ĕççĕр йулмалла пулаť.
— Суйатăн пуљ?
— Тупата. Çĕрĕç комиссариађĕ халĕ Наркомпромторкпа çак туса пĕтернĕ савăта ăçта лартасси çинђен калаçма тытăннă.

Ответ. редактор Г. Н. Казаков.

Чувашлит № 1523. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга". Нап. 4550 экз.